**Приложение к ООП НОО**

# Рабочая программа поучебному предмету

# «Литературное чтение на родном (чувашском) языке»

# для 2-4 класса

**Пуçламăш классенче литература** – ачасен тавракурăмне, тĕнчекурăмне йĕркелемелли, кăмăл – туйăмне хускатмалли тĕп хатĕрсенчен пĕри. Çавăнпа та литература вулавне пысăк тимлĕх уйăрма тивет. Ачасене кĕнекене юратма, пултаруллă вулавçă пулма вĕрентесси, вулав культурине хăнăхтарасси – питех те кăткăс ĕç, çав вăхăтрах яваплă ĕç те.

«Литература вулавĕ» вĕренӳ предмечĕ кăна мар, вăл ача-пăча аталанăвне тата воспитани ĕçне (ценности) витĕм кӳрекен хăватлă хатĕр те. Литература çӳпçи кăмăл-туйăмпа ăс-хакăл пахалăхĕсене аталантармалли майсемпе мелсем тĕлĕшĕнчен питĕ пуян. Ачасем пĕр – пĕринпе хутшăнма, айванраххисемпе вăйсăртараххисене хӳтĕлеме, пĕр пĕрне пулăшма, ваттисене сума сума, тăвансене юратма вĕренсе пыраççĕ. Илемлĕ сăмах, сăнарлă пуплевĕн палăрту хатĕрĕсемпе мелĕсем шкул ачисене культура тĕлĕшĕнчен аталантармалли никĕс. Хайлавсене вулани тӳрĕ кăмăллăх, тĕрĕслĕх, сăпайлăхпа сапăрлăх туйăмĕсене аталантарать. Çавăн пекех вĕсем кăнттамлăха, хыт кукарлăха, мĕскĕнлĕхе. Ĕмĕтсĕрлĕхе, тăмсайлăха тата ытти çавнашкал пулăмсене чухлама, вĕсене сивлеме вĕренеççĕ. Гражданлăх тата патриотизм воспитанийĕн никĕсĕ те – литературăн паха хайлавĕсене вуланинче.

Ку предметăн тĕп уйрăмлăхĕ - вулав ăслайĕсене калăпласа аталантарасси кăна мар, вулав ăнланулăхĕпе палăртулăхне çивĕчлетесси те.

Уроксен тематикине учебникринчен улăштарман.

Малтанхи вăхăтра вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене лайăхлатса пырасси, текстпа ĕçлес хăнăхăва çивĕчлетесси тĕп вырăнта тăрать. Литература вулавĕн урокĕсен ытларах пайĕ текстпа ĕçлеме, вулав хăнăхтарăвĕсем ирттерме каять.Çак ĕç ачасен пуплев ĕç–хĕлĕн ытти тĕсĕсене ( калаçу, çыру, тăнлу, итлев) аталантарассипе çыхăнса пĕр харăс, юнашар пулса пырать. Вулав ăслайĕсем çивĕчленсе, аталанса пынă май илемлĕ хайлава тишкересси маларах тухса пырать.

**Тĕп принципсем:**

Эстетика принципне шута илсе вулав картине илемлĕх тĕлĕшĕнчен паха, тĕнчери ача – пăча литературин ылтăн çӳпçине вырнаçнă хайлавсене кĕртетпĕр.

Литературоведении принципне шута илсе тĕрлĕ йышши хайлавсене вулав картине кĕртетпĕр:фольклор, классика, паянхи литература; тăван литература тата тĕнче литератури; литература жанрĕсем: юмах, калав, повесть, сăвă, юптару, халăх сăмахлăхĕн вак жанрĕсем. Пуплеве аталантарас принцип. Вулассипе пĕрлех итлес тата каласа парасăслайсемпе хăнăхусене тата аталантармалла. Пуплев культури ӳсет.

Ача – пăча психологине шута илесси. Тематикăпа жанр тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ йышши, кăсăклă тата çивĕч сюжетлă хайлавсене суйласа, ӳсĕм уйрăмлăхĕсене шута илетпĕр.

Ачасен аталанăвĕпе вĕренĕвĕ пĕр харăс пулса пыраççĕ. Вулав техникине аталантарассине илемлĕ хайлава формăпа содержании тĕлĕшĕнчен тишкерме вĕрентессипе харăс туса пырас пулать.

Вĕрентĕве практикăпа çыхăнтарасси. Литература теорийĕн материалĕпе ячĕшĕн мар, ачасен ăс – хакăлпа шухăшлавне туллин ĕçлеттерес тесе усă курмалла.

Тврочествăлла вĕренӳ. Вулавçăн çыравçăпа, геройсемпе пĕрле хурланма е савăнма, лайăххине япăххинчен, ыррине усаллинчен уйăрма вĕренсе пымалла. Ачасем хăйсем те хайлавсем ăслама вĕренсе пыччăр.

Пуçламăш тата вăтам классенчи вĕрентĕве пĕр – пĕринпе тачă çыхăнтарасси. Тĕллевсемпе задачăсенге, вĕрентӳ содержанийĕпе формисене, мелсемпе меслетсене малтанхисене кайранхисемпе çыхăнтаратпăр.

**Предмет пахалăхĕсем**

Вулав – пуплевпе шухăшлава аталантармалли тĕп ĕç- хĕл. Пуçламăш классенче вулав пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк, мĕншĕн тесен шăпах çак вăхăталла этемĕн ăс – хакăлпа кăмăл – сипет пахалăхĕсем, ĕç – хĕл тĕсĕсем никĕсленеççĕ.

Вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси халиччен ытларах класри тата класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче пулса пырать.

Литература вулавĕ - пуçламăш классенче чĕлхене вĕрентес меслетлĕхре çĕнĕ ăнлав. Ку уроксене – вулавран литературăна куçмалли çул – йĕр вырăнне хураççĕ.

Вулав урокĕсенче ытларах ачаран пултаруллă вулакан тат итлекен хатĕрлессине тĕп вырăна лартнă пулсан, литература вулавĕн урокĕсен тĕллевĕ самай анлăланать, вăл вĕренекентен пултаруллă вулавçă хатĕрлессипе çыхăнса каять.

Литература вулавĕнче çак **задачăсене** лартатпăр, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕç никĕсне хывса хăвармалла:

- ача çитĕнсен мĕнпур этемлĕхĕн литература пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартăр;
- тĕнче литературин пÿлминче чăваш литературин тÿпи те пысăк пулнине ăнкартăр;
- хайлава ăнланса илме ăна хайланă пекех йывăррине асăрхатăр;
- кирек хăш хайлав та çыравçă пуçĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала иккенне чухлатăр, хăй те хайлас ĕçе явăçма сĕмлентĕр;
- ача – пăча ăс – тăн тĕлĕшĕнчен çеç мар, чи малтан кăмăл – сипетпе туйăм – сунăм тăлăшăнчен тасалса пуянлантăр.

Литература вулавĕ пуçламăш шкулăн чи пысăк икĕ тĕллевне пĕрлĕхлĕн татса пама май парать:

- вулама тата кĕнекене юратма вĕрентет;
- литература хайлавне ăнланма тат унпа ĕçлеме вĕрентет.

Палăртнă тĕллевпе килĕшÿллĕн, тĕпрен илсен тата çак задачăсене татса памалла:

- ачасен харкам ÿсĕмне тивĕçтерекен литература хайлавĕсене вулас кăмăлне амалантарасси; 

хайлав хăнăхăвĕсене лайăхлатса, çивĕчлетсе парасси;

- хайлав тексчĕпе ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпласси;
- хайлавсене туллин ăнланса ăса хывма вĕрентесси;
- илемлĕ хайлавсене ăса хывмамалли, асăмламалли мелсене (палăртуллă вулав, пăхмасăр калама вĕренесси, драмăласси, сăмахлă ÿкерчĕк, ăславлă каласа парасси) алла илесси;
- литература пĕлĕвĕн ансат «нлавĕсемпе паллаштарасси, вĕсен тĕслĕхĕсене текстра тупма хăнăхтарасси, чĕлхе илемне туйма, чухлама вĕрентесси;
- пурнăçри (çут çанталăкри, этемпе этем, этемпе çут çанталăк хутшăнăвĕнчи) илеме асăрхама, юратма хăнăхтарасси, чун –чĕрепе кăмăл – сипеттĕлĕшĕнчен тасарах пулма хавхалантарасси.

### Ĕç результачĕсем (харкамлах, предметсен перлехле, пайрамла результачесем)

Стандартра вĕренÿ вĕçленнĕ тĕле ачасен мĕн пĕлменнине, вĕсен ĕç результачĕсем мĕнле шайра пулмаллине те кăтартнă. Вĕсене тĕпрен илсен виçĕ ушкăна уйăрнă. Харкам (личностные) результатсем ачасем хăйсен социумри вырăнне ăнланассипе, вĕсен тĕнче курăмне йĕркелессипе, тĕрлĕ халăх çыннисен культурине ăнланса йышăнма, тантăшĕсемпе тата аслисемпе тĕрлĕ лару- тăрура хутшăнма вĕрентессипе, вĕренÿ ĕçне сăлтавлама, вĕренекен яваплăхне ăнланса ăса хывма пулăшассипе çыхăнса тăраççĕ.

Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные) содержанийĕнче палăртнă ăслайхăнăхусем, компетенцисем пуçламăш шкулти ытти предметсене вĕрентнĕ май йĕркеленсе пымалла. Ку вăл ачасене вĕренÿ тĕллевĕпе задачисене ăса хывма, асра тытма, вĕсене татса пама май паракан çул-йĕре шырама вĕренсе пырасси; вĕренÿри тĕп ăнлавсене уçăмласси; вĕренÿ ĕçĕмĕсене (учебные действия) алла илесси.

Уйрăм предметăн ятарлă результачĕсем пĕр-пĕр предмета вĕрентнĕ май йĕркеленекен ятарлă ăслай- хăнăхусем, компетенцисем кĕреççĕ.

ВУДсене калăплас тĕлĕшĕнчен çапларах результатсем пулмалла:

**Кăмăл-сипете аталантарасси:**

- ачасене «тăван кĕтес», «Тăван çĕр-шыв» ăнлавсене уçăмлатма, харпăр хăй пурăнакан вырăна юратма, сыхлама хăнăхтарасси; тăван тавралăх, тăван кĕтес çинчен ытларах пĕлме хавхалантарасси; патриотлăхпа гражданлăх туйăмĕсене тарăнлатасси;
- харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;
- аваллăха тĕпчени кирлине, халăх ĕмĕрсем хушши упранă мула хаклама вĕрентни ; халăхăн

чи пысăк мулĕ – унăн чĕлхи, йăли – йĕрки уявĕсем пулнине вĕрентни;
- чăвашсем ĕҫчен халăх пулнине, ачисене ҫамрăклах ĕҫе хăнăхтарнине, аслисен сăмахне итлемеллине, тăвансене пулăшмаллине, ваттисене хисеплемеллине, хăйсене ҫын ҫинче тирпейлĕ тытмаллине палăртса хурасси;
- чĕлхе илемлĕхпе тасалăхне ҫирĕп тытса пыма хăнăхни;
- туссене пĕр-пĕрне пулăшмаллине, вылянă чух кăмăллă та ăшă пиллĕ пулмаллине асăрхаттарасси;
- чĕр чунсене юратма , вĕсем те ҫынсем пекех туйма пултарнине, хăйсене майлă ăсĕ пуррине палăртма вĕрентесси;
- йывăр вăхăтра пулăшма, ырри усаллине ҫĕнтерессе шанса пурăнма , кăмăллă, пĕр – пĕринпе килĕштерсе пурăнма вĕрентни;
- шӳте ăнланма, ачасене хăйсене шӳтлеме вĕрентсе пыни, - ҫирĕп те тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентни ҫыннăнне ыйтмасăр илмелле маррине ăнлантарни;
- туслăх туйăмĕсене упрама хăнăхтарасси;
- ҫут ҫанталăк илемне асăрхама, унпа килленме хавхалантарасси;
- тăванлăах туйăмĕсене хаклама, ҫывăх ҫынсене юратма, вĕсене хисеплеме хавхалантарасси. Универсаллă вĕренӳ ĕҫ-хĕлĕсем:
- ачасене кун йĕркине пăхăнма, учитель вуланине итлеме тата ăнланма, хăйсен туйăмĕсене сăнаса пама хăнăхтарасси;
- - автор кăмăлне асăрхама, харпăр хăй кăмăл-туйăмне сăнама, палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен илемлĕ, палăртуллă вуланине аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем ҫине туллин хуравласси, хăйсен шухăшне уҫăмлă палăртма вĕрентесси;
- группăсемпе мăшăрпа ĕҫлеме хăнăхтарасси; ачасене хăйсен ĕҫне хаклама вĕрентесси;
- тĕрлĕ жанăрлă хайлавсен хăйьевĕрлĕхне курма вĕсене уйăрса илме вĕрентесси;
- публицистика хайлвĕн тĕп паллисемпе тата уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси;
- харкам тĕллĕн шухăшлама , шухăшĕсене хăйсен сăмахĕсемпе палăртма пĕлни;
- ачасен вулав пахалăхĕсене ( тĕрĕслĕхне, палăртулăхне) аталантарасси;
- сăнарсен ĕҫне хаклама пĕлесси; - вулавҫă тавракурăмне калăпласси, харкам тĕллĕн вулас опыта тарăнлатасси;
- вăлтса каланине ăнланма вĕрентесси;
- диалога хутшăнас, палăртса вулас, хатĕр леннĕ хыҫҫăн тата хатĕрленмесĕр каласа парас хăнăхусене тарăнлатасси;
- сасса тĕрĕс улăштарса вулас ăслайсене аталантарасси;
- презентации тăвас, хӳтĕлес ăслая аталантарасси.

**Предмет ăшĕнчи пĕлӳ, хăнăху:**

- шкул йĕркисемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланса, ăса хывса куллен пурнăҫлаттарасси, ҫыхăнуллă калаҫма вĕрентесси;
- илемлĕ хайлав, автор, хайлаври сăнарсем, хайлавра сăнланă ĕҫ йĕрки ăнлавсемпе паллаштарасси, вĕсене туйма, ăнланма вĕрентме пуҫласси;
- хайлавсен тĕрлĕ (илемлĕ, ăслăх) тĕсĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсемпе хăйьевĕрлĕхне курма вĕрентсе пырасси;
- палăртуллă вулав ăслайĕсене аталантарасси;
- сăвăсенче туйăм мĕнле аталанса пынине сăнама хăнăхтарасси;
- хайлав чĕлхине туйма, сăнарлăх, палăртулăх мелĕсене ăнланма вĕрентсе пырасси;
- ăслăх хайлавĕсене йышăнма, ăнланма пĕлнине аталантарасси;
- илемлĕ хайлав уйрăмлăхĕсемпе хăйьевĕрлĕхне курма вĕрентсе пырасси, ăна ы ти хайлавсенчен уйăрса илме вĕрентесси;
- калаври тĕп сăнарсене тупасси, калава пайсем ҫине уйăрасси;
- халăх сăмахлăхĕнчи тĕрлĕ сăвăсене танлаштарма, вĕсене кăмăл-туйăма палăртса, артикуляцие ҫирĕплетесси;
- юмахсен тĕсне(чĕр чун, йăла, асамлă юмах) палăртас, ĕнентерсе ҫирĕплетес пултарулăхне аталантарасси; юмах логикине, сюжетне сăнатарасси;

- халăх сăмахлăхĕнчи юмах-халапсен, сăвă-юрăсен пĕтĕмĕшле авторĕ халăх пулнине ăнлантарасси;
- хăвăрткаларăшсене такăнмасăр калама вĕрентни, артикуляцие çирĕплетни;
- халапсене илемлĕ – сасса кирлĕ пек улăштарса, харпăр хăй унта пулса курнă евĕр каласа пама хăнăхтарасси, халапа пурнăçпа çыхăнтарма вĕрентесси;
-«танлаштару», «эпитет» ăнлавсене ăнланасси: вĕсене уйăрма пĕлесси, калав. Сăнлав, уйлав ăнлавсене çирĕплетесси,калуллă тата сăнлавлă калавсене танлаштарса сăнасси;
- сăмах искусствин сăнарлăхĕпе илемне туйма вĕрентесси;
- прозăпа илемлĕ хайлавсем те сăвăласа çырни евĕр кĕвĕленме пултарнине асăрхасси;
- шÿтлĕ хайлавсене туйăмлă йышăнма хăнăхтарасси, шÿтлĕ хайлавсен хĭнеъевĕрлĕхне сăнаттарасси;
- калаври ĕçсен аталанăвне; сăнаттарасси; чи çивĕч самантa палăртма вĕрентеси;
- текстра автор турремен каламан шухăша кăтартасси; тимлĕ вулав ăслайĕсене аталантарасси;
-информацин тĕрлĕ çăлкуçĕпе ĕçлеме хăнăхтарасси

**Йĕркелÿ (регулятивлă):**

- ĕçе пурнăçлассипе унăн результачĕсен хăш – пĕр тапхăрĕсене харкам тĕллĕнех тĕрĕслесе тăма. Хутшăну (коммуникативлă) ВУДсем тĕлĕшĕнчен ача вĕренсе çитет: юнашар ларакан ачапа пĕрле, пĕчĕк тата пысăкрах ушкăнсенче ĕçлеме: рольсене валеçсе илме, ушкăнри ĕçсен харкам пайне пурнăçлама, ăна ушкăнпа килĕштерме;харкам шух ăшнеăнлантарма; текстра вăл е ку сăнар хăтланăшĕн сăлтавне ăнлантаракан саманта тупма.

**Харкамлăх ВУДсем** тĕлĕшĕнчен ачан харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;сăнарсен ĕçĕ – хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл – туйăмне тишкернĕ май пĕтĕм этемлĕх сума сăвакан пахалăхсене ăнкармалла, ырăпа усала уяма вĕренмелле; илемлĕ хайлавсем вуланă – тишкернĕ май ачасен илемлĕхпе сăнарлăх туйăмĕ аталанмалла.

Ăса хывмалли ăслайсемпе хăнăхусене çапларах палăртатпăр:

Вулав хăнăхăвĕсем:

- тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене – сыпăкласа) вуласси;
- вулав хăвăртлăхĕ минутра сăмахран кая мар пулмалла (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 60 таран ÿсмелле);
- вуланă чух шухăша пăсмасăр, тĕрĕс чарăнусем туса сывлăш çавăрса ярасси, текстра паллакан тата палламан сăмахсене уйăрасси;
- хутсăр предложенин пур тĕсĕсене те тĕрĕс интонаципе вуласси;
- пĕлтерĕшне тата шухăшне кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси. Текстпа ĕçлесси:
- тест ятне ăнлантарасси;
- учитель ертсе пынипе текста, ĕçсен йĕркине кура пĕлтерĕшлĕпайсене уйăрасси, вĕсене ят парасси (план тăвасси);
- ансат план тăрăх хайлава асăмласа каласа парасси;
- харкам шухăша текстри тĕслĕхсемпе çирĕплетесси;
- учитель пулăшнипе хайлавăн тĕп шухăшне палăртасси;  юмаха, калава, сăвва пĕр – пĕринчен уйăрса илесси;
- текста пахаласси;
- вуланă текст тăрăх сăмахлă

ÿкерчĕксем тăвасси; Пуплеве аталантарасси:

- текстра тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне уçăмлатасси;
- пулăма, сăнарсене сăнлама сăмахсен ретĕнчен вырăнлăраххисене, витĕмлĕреххисене суйласа илесси;
- сăмахăн тÿрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсене палăртасси;
- чĕлхе туйăмне çивĕчлетесси;
- нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнкарма, сăмах пулăвне чухлама хăнăхасси;
- сасăллă пуплевĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене – хăвăртлăха, янăравлăха, сасă

хулăнăш – çинçĕшне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси.

**Литература теорийĕн никĕсĕсем:**

- илемлĕ литература хайлавĕсемпе фольклор хайлавĕсене , вĕсен жанрĕсене уйăрма вĕренсе пырасси;
- хайлав тытăмне ăнланасси (композиции, сюжет);
- сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавласси;
- хайлаври сăнлăх тата сăнарлăх.
- пултарулăх хатĕрĕсене курма, вĕсемпе усă курма хăнăхасси.
- Ачасен хуравĕсем тăрăх вĕсен çак ăслай хăнăхăвĕсене йĕрлеме, палăртма май пултăр:
- ача хайлавра сăнланă пулăма сăнарланă ĕçсене мĕн таран йышăнни – ăнланни;
- вăл хăйĕн кăмăл – туйăмĕ мĕнле улшăннине сăнама пултарни;
- хайлаври эпизодсем хушшинчи çыхăнăва курма: унти сăнласен пĕлтерĕшне, сăнарсен характерĕсене сăнама, хайлавăн содержанийĕпе формин шайлашăвне ăнланма пĕлни;
- хайлавăн тĕп шухăшне ăнланма, харкам тĕллĕн пĕтĕмлетӳсем тума. Тишкерӳ уйрăм ăслайĕсем:
- чĕлхен сăнарлăхпа палăртулăх хатĕрĕсене вĕсен хайлаври вырăнĕпе тӳпине кура тишкерме пĕлни; хайлавра автор сăнарланă ӳкерчĕке куçкĕрет кăларма пултарни;
- хайлавра çыхăнусемпе хутшăнусене курма, сăлтавлама пĕлни;
- хайлаври сăнара пĕрлĕхлĕ йышăнма пултарни;
- автор мĕнле пăхнине, мĕнле кăмăлпа каласа панине, унăн позицине курма пĕлни;
- хайлав тĕп шухăшне ăнланма пултарни.

**Пуçламăш шкултан вĕренсе тухаканăн ç а к н а п ĕ л м е л л е (ăнланмалла):**

- вĕреннĕ литература хайлавĕсен ятне, тĕп содержанине. ç а к н а т у м а п у л т а р м а л л а:
- кĕнеке элеменчĕсене (хуплашка, титул листи, тупмалли, ӳкерчĕк, аннотации) уйăрма;
- илемлĕ хайлав текстне ăшра вуласа ăнланма;
- хайлавăн темипе тĕп шухăшне палăртма;
- вуланин содержанине каласа пама;
- текста пĕлтерĕшлĕ пĭсене уйăрама, текстăн ансат плане тума;
- текст çине таянса пĕчĕкçĕ монолог ăслама, ĕçсене, геройсене хак пама;
- сăвăллă хайлавсене пăхмасăр каласа пама;
- сĕннĕ тема тăрăх сăмах вĕççĕн пĕчĕкçĕ текст ăслама;
- тĕслĕх вырăнне фольклор хайлавĕсемпе усă курма;
- илемлĕ литература жанрĕсене (юмах, калав, юптару), халăх юмахĕсене тата литература ( автор) юмахĕсене пĕр – пĕринчен уйăрма;
- вĕреннĕ материалтан суйласа илнĕ тĕрлĕ темăллă хайлавсен тĕслĕхĕсене асăнма;
- туяннă пĕлӳсене тата ăслайсемпе практикăра тата кулленхи пурнăçра усă курма;
- харкам тĕллĕн кĕнеке вуланă чухне;
- харкам тĕллĕн кĕнеке суйланă, унăн содержанине кĕнеке элеменчĕсем çине таянса палăртнă чухне;
- тĕрлĕ информацм хатĕрĕсемпе (словарьсемпе, справочниксемпе, энциклопедисемпе, электрон пособийĕсемпе) ĕçленĕ чухне.

**Вĕренӳ предмечĕн шалашĕ**

**2 класс . Вулав карти.**

**Шкула. К**алавсем, сăвăсем, статьясем. Ачасен савăнăçĕ. Ĕлĕкхи шкул пурнăçĕ çинчен çырнă хайлав.

**Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв.**Чăваш халăхĕ. Чăваш чĕлхи. Тăван халăхĕн аваллăхĕ,

ваттисен сăмахĕсем, калавсем, сăвăсем, статьясем. Хайлав сыпăкĕсем. Пирĕн çĕршыври хуласемпе ялсем. Тăван республика çыннисен ĕç-хĕлĕ. «Пирĕн ял (хула)» экскурси.

**Халăх сăмахлăхĕ.** Чăваш тата ьтти халăхсен юмахĕсем,мифсем, юррисем, ваттисен сăмахĕсемпе, туптарусем.

**Юмахсем.** Чăваш тата ытти халăхсен юмахĕсем. Автор юмахĕсем.
**Кĕркунне**. Кĕркуннен тĕрлĕ тапхăрне (кĕр пуçламăшĕ, ылтн кĕркунне, хура кĕркунне). Сынсен ĕçĕ- хĕлĕ. Чĕр чунсемпе ӳсен—тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусене сăнлакан калавсемпе сăвăсем. Çынсем çут çанталăка упрассишĕн тăрăшни, çак ĕçе ачасем те хутшăнни .

**Эпир — туслă та хаваслă ачасем**. Ачасен пурнăçĕпе ĕçé-хĕлĕ, вĕсем туслă пулни, пĕр-пéрне пулăшни.

**Ĕç телей те савăнăç кӳрет**. Ĕç çинчен, тĕрлĕ професси çинчен, ĕçĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ, *халăх* пурлăхĕшéн тăрăшни, çынна телей кӳни çинчен, çырнă калавсемпе сăвăсем.

**Хĕл**. Хĕллехи çанталăк. Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен хĕллехи пурнăçĕ. Çĕнĕ çула кĕтсе илни. «Хĕл иртсен» экскурси.

**Тăван кил-йышра**. Пирĕн несĕлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, Аннесем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.

**Килчĕ ырă çуркунне**. Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçéнчи улшăнусем. Пăр кайни. Ачасен вăййи-кулли. Аслисен çурхи ĕçĕсем.

**Чĕр чунсем — пирĕн туссем.** Чĕр чунсем çинчен çырнă калавсем, сăвăсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем*)*. Чĕр чунсене хӳтĕлесси, вĕсене пулăшасси.

**Ӳсен-тăран тĕнчи.** Вăрман пурнçĕ, ӳсен-тăран çинчен çырнă сăвă-юрă, калавсемпе халапсем.

**Çу уйăхне кĕтĕмĕр**. Çуллахи çут çанталак, уй-хирти тата пахчари ĕçсем, çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем, тĕрленчĕксем.

**3 класс.**

**Ак çитрĕ сентябрь. К**алавсем, сăвăсем, статьясем. Ачасен савăнăçĕ. Ĕлĕкхи шкул пурнăçĕ инчен çырнă хайлав.

**Чăваш çĕршывĕ.** Чăваш ен илемĕ, юхан шывĕсемпе вăрманĕсем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни. Чăваш çыннин ĕçченлĕхĕ çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем, юмахĕсем, калавсемпе сăвăсем. Еçчен çын тулăх пурăнни, тĕрлĕ професси çинчен çырнă хайлавсем.

**Кĕркунне.** Кĕрхи çут çанталăк, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. «Кĕрхи çут çанталăк» экскурси.

**Халăх сăмахлăхĕ.** Вăйă юррисем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем), пулмасла халап, юптарусем.

**Улăп йăхĕнчен эпир, туссем…** Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем.

**Юмах юпа тăрринче** Тĕрлĕ халăх юмахĕсем.

**Асамçă хĕл**. Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, Ӳнерçĕсен Ӳкерчĕкĕсенче сăнланни. «Хĕллехи çут çанталăк» экскурси.

**Эпир - сăпайлă ачасем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрăшнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине сăнлакан калавсем, сăвăсем, статьясем.

**Çур хаваслăхĕ.** Çут çанталăк чĕрĕлни. Чĕр чунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. «Çурхи çут çанталăк» экскурси.

**Кĕрленĕ вăрçă çĕр çинче тахçан.** Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă

çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

**Чĕр чун тĕнчи.** Чĕр чунсем çинчен çырнă калавсем. Чĕр чунсене хӲтĕлесси, вĕсене пулăшасси.

**Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх.** Çынсем тăван тавралăха упрама, илем

кӳме тăрăшнине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине сăнлакан калавсемпе сăвăсем.

**Этем чун-чĕрипе илемлĕ.** Чăнлăхпа суя, чыслăхпа чыссăрлăх, тараватлăхпа чурăслăх, ăшă кăмăллăхпа хĕрхенӳсĕрлĕх çинчен çырнă калавсем, сăвăсем,юмахсемпе юптарусем.

**Тус-тăванла пурăннине мĕн çитĕ...** Туслăх, тăванлăх çинчен калакан калавсем, сăвăсем, юмахсемпе юптарусем.

**Чăваш халăхĕн паллă çыравçисем.** К.Иванов, Н.Шелепи, Н.Илпек, М.Трубина сăввисемпе калавĕсем..

**Тăванла халăхсен çыравçисем.** Сергей Чавайн, Габçулла Тукай сăввисемпе поэма сыпăкĕсем.

**Вырăссен чаплă çыравçисем.** А.Пушкин, И.Крылов, Л.Толстой, Н.Гоголь хайлавĕсем. Вырăссен хальхи ача-пăча литературин тĕслĕхĕсем: Б.Житков,С.Барузин хайлавĕсем.

**4 класс**

**Аван – и, шкул саккийĕ!.. Килсе çитрĕ тулăх кĕр.** Кĕрхи çут çанталăк. Çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Ĕç çыннисем çут çанталăка упрассишĕн тăрăшни, çак ĕçе ачасем те хутшăнни. «Тăван тавралăх» экскурси.

**Ку вăл – ман Тăван çĕршыв.** Ку вăл ман Тăван çĕр-шыв. Чăваш халăхĕ. Чăваш чĕлхи. Тăван халăхăн аваллăхĕ, ун çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем, калавсем, сăвăсем, статьясем, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем. **Пирĕн йăла – йĕрке**

**Шурă юр çусассăн.** Хĕл вăхăтне сăнлакан хайлавсем. Вĕсенче тăван тавралăха, тăван çĕре юратни палăрни. Хĕл тата çур вăхăчĕ çинчен калакан туптарусем, ваттисен сăмахĕсем. çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсем.

Вырăссен манăçми çыравçисем. А.Пушкин, Н.Некрасов, С.Есенин, М.Пришвин, Н.Сладков, А.Куприн, В.Бианки çырнă хайлавсем.

**Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен.**

Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Вĕсенче этем ăс-тăнĕн ырă енĕсем (ваттисене хисеплени, Тăван çĕр-шыва юратни, сăпайлăхпа ĕçченлĕхе ырлани, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни) палăрса тăни. Писательсем çырнă юмахсем, юптарусем, ытти халăхсен юмахĕсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем. Халăхăмăрăн сумлă çыравçисем. Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Х.Уяр, А.Артемьев. Вĕсен уйрăм сăввисем, калавĕсем, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем.

**Кусем — манăн туссем.** Ачасен пурнăçĕ, вĕсен юлташлăхĕпе туслăхĕ, ĕçченлĕхĕпе сăпайлăхĕ. Туслă тантăшсем тăван халăхăн ырă йăли-йĕркине асра тытни.

**Ырăпа усал.** Ултавпа суя, тӳрĕлĕх-чăнлăх, хĕрхенӳпе хытă чунлăх, чурăслăх, ĕçченлĕхпе наянлăх, каппайчăклăхпа сăпайлăх, тӳрккеслĕхпе ыр кăмăллăх çинчен калакан хайлавсем, юмахсем.

**Атте-анне пурри — телей тата пуянлăх.** Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.

**Ӳсен- тăран тĕнчинче.**

Вăрман-çаран, чечек-курăк çинчен калакан хайлавсем.

**Çуркунне çитсессĕн...** Çурхи вăхăта, пурнăç илемĕпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чĕнекен хайлавсем.

**Чĕр чунсем — пирĕн туссем**. Ачасемпе чĕр чунсем хушшинчи хутшăну. Чĕр чунсене юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăмсене çуратакан хайлавсем.

**Вăрçă кĕрленĕ чух.** Тăван ĕçĕр-шывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

**Çу пуçланчĕ.** Çуллахи çут çанталăк. Тавралăх.

**Вулав хãнãхãвĕсем**. Тĕрĕс, ăнланса, кирлĕ интонаципе вуласси. Шухăшпа тĕллеве кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хапартмасăр вуласси.

**Текстпа ĕçлесси.** Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси..Мĕн вулани çинчен ыйтусене хуравласси, каланине текстри предложенисемпе çирĕплетесси. Текста пахаласси, ãна вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е кĕнекери ӳкерчĕклĕ план тãрãх аса илсе каласси. Вуланã. текст тãрãх сãмахлã

ӳкерчӗксем тӑвасси. Пысӑках мар калав шалӑшне (содержанине) пӑтраштармасӑр, йӗркипе аса илесси. Кӗнекери ӳкерчӗксем мӗне сӑнланине, вӗсем калавӑн хӑш пайне кӑтартнине палӑртасси, ҫав вырӑна текстра тупасси.

Калава темиҫе пая уйӑрасси, вӗсене ят парасси; вуланӑ текстӑн тӗп шухӑшне палӑртасси (вӗрентӳҫе пулӑшнипе).

Илемлӗх мелӗсене — танлаштарусене, эпитетсене, метафорӑсене (терминсене асӑнмасӑр)- сӑнасси. Ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене танлаштарасси, ун пек сӑмахсене вӗрентӳҫе пулӑшнипе тупасси. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тӗрӗс ӑнланасси. Вӗрентӳҫӗ пулшнипе текстра тӗрлӗ пулӑма, ҫынна, ҫут ҫанталӑка сӑнарлӑн кӑтартакан сӑмахсене тупасси, вӗсемпе сӑмахлӑ ӳкерчӗксем тунӑ чух усӑ курасси, тавралӑха сӑнасси, тантӑшсемпе выляни ҫинчен пӗчӗк калав хайласси. Юмаха, калава, сӑвва пӗр-пӗринчен уйӑрса илме пӗлесси. Сасӑллӑ пуплевӗн (калаҫӑвӑн) пысӑк пӗлтерӗшлӗ мелӗсене — хӑвӑртлӑха, янравлӑха, сасӑ хулӑнӑш-ҫинҫешне, кӗвӗлӗхне кирлӗ пек улӑштарма вӗренесси. Сӑмахсенсе тӗрӗс каласси.

**Вулав кӗнекине чухласси**. Тупмаллипе усӑ курасси. Хайлав хыҫҫӑнхи ыйтусемпе ӗҫсене пурнӑҫласси. Кӗнекепе хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесси.

**Класс тулашӗнчи вулав**

**Вулав материалӗ.** Кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли кӑларнӑ чӑваш, вырӑс тата ытти халӑх ҫыравҫисен кӗнекисем. «Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журналти материалсем.

**Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси.** Класс тулашӗнчи вулав урокне хатӗрленнӗ май кирлӗ кӗнекене суйласа вулама, тӗрлӗрен пулӑшу кӗнекипе. Хаҫат-журналпа усӑ курма пӗлесси.Планпа усӑ курса мӗн вуланине кӗскен каласа парасси, вуланӑ сӑнар ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тасси Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн хуплаашки. Титул листи, тупмаллипе ӳкерчӗксем. Ум сӑмахӗпе юлашкинчен калани тӑрӑх ӑнкарасси. Кирлӗ кӗнекен е хаҫат-журналти статьян ятне, унӑн авторне кӑтартса тӗрӗс ҫырса илесси. Кӑмӑла каякан кӗнекене библиотекӑран илсе вуласси.

**Литература вулавĕ урокĕсен тематикăллă планĕ**

**2-мĕш класс - 68сех. (2сех. эрнере)**

| | **Тема урока** | |
|---|---|---|
| | ***Шкула*** | ***2*** |
| ***1.*** | Эпĕ иккĕмĕш класс ачи. «Чи саванасла кун» А. Алка. | 1 |
| 2. | «Илемлĕ хайлав», «автор». «Чернил» Шухши Иване. | 1 |
| | ***Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?*** | ***4*** |
| 3. | Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. | 1 |
| 4. | Сăвăласа çырнă хайлав. | 1 |
| 5. | Ăслăх хайлавĕ; унăн тытăмĕпе чĕлхи. | 1 |
| 6. | Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав. | 1 |
| | ***Халăх сăмахлăхĕнчен*** | ***6*** |
| 7. | Тупмалли юмахсем. | 1 |
| 8. | Пулмасла халапсем. Хутлам е вĕççĕр такмаксем. | 1 |
| 9. | Йăла юррисем. Вăйă юррисем. Çăварни. | 1 |
| 10. | Пуплешӳ сăввисем. Чăвашсен ача-пăча вăййисем. | 1 |
| 11. | Улăп халапĕсем. | 1 |
| 12. | Чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем. | 1 |
| | ***Юмахсем*** | ***4*** |
| 13. | Йăла юмахĕсем. | 1 |
| 14. | Асамлă юмах. Асамлă юмах паллисем. | 1 |
| 15. | Сăвăласа çырнă юмахсем; автор юмахĕ. | 1 |
| 16. | Автор çырнă йăла юмахĕ. | 1 |
| | ***Кĕркунне*** | ***4*** |
| 17. | Сăвăллă тата прозăллă хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсем. | 1 |
| 18. | Ылтăн кĕркунне. Калуллă тата сăнлавлă калавсем. | 1 |
| 19. | Хура кĕркунне. Сăвăлласа çырнă хайлавсем. | 1 |
| 20. | Сăнлавлă хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсем. | 1 |
| | ***Эпир туслă та хаваслă ачасем*** | ***7*** |
| 21. | П.Хусанкай. «Шкул ачи». С. Иванов. «Сапăрлăх çинчен». Сăвăллă тата прозăллă юптару | 1 |
| 22. | Сăвăллă тата прозăллă юптару. | 1 |
| 23. | Калаври ĕçсен аталанăвĕ. Калаври сăнарсем. | 1 |
| 24. | Шӳтлĕ сăвăсем. | 1 |
| 25. | Калаври ĕçсен аталанăвĕ. Калавăн тĕп шухăшĕ. | 1 |
| 26. | Сăвăласа çырнă шӳтлĕ калавсем. | 1 |
| 27. | Хайлаври тĕп сăнарсем. Хайлавăн тĕп шухăшĕ. | 1 |
| | ***Еç телей те савăнăç курет.*** | ***7*** |
| 28. | Калавăн тĕп шухăшĕ. Чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем. | 1 |
| 29. | Илемлĕ хайлаври сăнарлăх мелĕсем. | 1 |
| 30. | «Кулач»- йала юмахĕ | 1 |
| 31. | Пысăк калăпăшлă сăвăллă хайлав (поэма) | 1 |
| 32. | Калаври ĕçсен аталанĕвĕ.Чи çивĕч самант. Калав планĕ. | 1 |
| 33. | Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав кĕвĕлĕхĕ, сăнарлăхĕ. | 1 |
| 34. | Калавçă кăмăлĕ хайлавра плăрни. Автор тата калавçă. | 1 |
| | ***Хĕл.*** | ***7*** |
| 35. | Сăнлав тумалли хатĕрсемпе мелсем. | 1 |
| 36. | Ансат ăслăлăх хайлавăн уйрăмлăхĕсем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 37. | Сăмахлă укерчĕксем туни. | 1 |
| 38. | Калаври ĕç аталанĕвĕ. | 1 |
| 39. | Калавçă кăмăлĕ палăрни. | 1 |
| 40. | Автор юмахĕ. | 1 |
| 41. | В.Эктелĕн «Юр пике» сăвви. Çут санталăк илемĕ. | 1 |
| | ***Тăван кил-йышра*** | ***3*** |
| 42. | Тĕнчере чи хакли- манăн юратнă анне. Сăмахлă ӳкерчĕк. | 1 |
| 43. | Кулăш тумалли мелсем. | 1 |
| 44. | Текстра каламан автор шухăш-кăмăлĕ палăрни. | 1 |
| | ***Килчĕ ырă çуркунне.*** | ***5*** |
| 45. | Сăвă. Сăнлавлă калав. | 1 |
| 46. | Публицистика хайлавĕ. Пайрăмсем (детальсем). | 1 |
| 47. | Хĕвел пăхать, юр каять. Кĕçе çулла пуçланать. Хайлав тата ӳнерçĕ ӳкерчĕкĕ. | 1 |
| 48. | Çуркунне. Çут çанталăка сăнани. | 1 |
| 49. | Сăвăри сăмахсен йĕрки. Танлаштару. | 1 |
| | ***Чĕр чунсем- пирĕн туссем.*** | ***9*** |
| 50. | Хайлав ячĕ, содержанийĕ тата тĕп шухăшĕ. | 1 |
| 51. | Хайлаври самантсем. Хайлав теми тата ячĕ. | 1 |
| 52. | Юра астисем. | 1 |
| 53. | Текерлек.М.Стельмах | 1 |
| 54. | М. Пришвин «Çăмăлттай».Темăпа тĕп шухăш | 1 |
| 55. | К.Чуковский «Чăх чĕппи». Калав, сăнлав, план. | 1 |
| 56. | Юратнă чĕр чунсем. Танлаштару.Темăпа тĕп шухăш. | 1 |
| 57. | Г. Харлампьев «Çырла пиçсен». Калав планĕ. | 1 |
| 58. | Б.Заходер. «Мулкач çури». Калав. Юмах | 1 |
| | ***Усен- тăран тĕнчи*** | ***3*** |
| 59. | Н. Матвеев « Пĕр йăхри йывăçсем»; Ç.Элкер «Юман». Калав.Сăнлав | 1 |
| 60. | Г. Орлов. «Вăрманăн пĕрремĕш кучченеçĕ».Калав. Сăнарлăх мелесем. | 1 |
| 61. | Н.Сладков. «Пулă тăвăнни».Калав. Каласа пани. Çанталăк паллисем. | 1 |
| | ***Çу уйахне кĕтемĕр.*** | ***7*** |
| 62. | Сăвăра туйăмсем палăрни. Сасă çырăвĕ. | 1 |
| 63. | Сăнлавлă калаври ĕç йĕрки. Вулав пахалахне тереслесси. | 1 |
| 64. | Ю. Силэм. «Утă çинче вăрманта».Калав, унăн планĕ. | 1 |
| 65. | Г. Тал –Мăрса.«Хирте». М. Пришвин «Ылтăн çаран».Туйăм тата сăнарлăх. | 1 |
| 66. | Утара.Туйăм тата сăнарлăх. | 1 |
| 67. | Хирте. Калав, унăн планĕ. | 1 |
| 68. | Туйăм тата сăнарлăх. Çут çанталăка сăнас ăсталăх. | 1 |

**3-мĕш класс - 68сех.**

| № п/п | Тема | Сех. шучĕ |
|---|---|---|
| | **Ак çитрĕ сентябрь...** | 3 |
| **1** | «Çамрăкла вĕренни-чул çинче». «Вĕреннĕ лаша» | 1 |
| **2** | Мăйăр хуппи | 1 |
| **3** | Чи хаклă парне. | 1 |
| | **Чăваш çĕршывĕ** | 3 |
| **4** | Тăван çĕр шыв-пирĕн анне. Ылтăн çĕр | 1 |
| **5** | Лăпкă çĕр шывра Н. Янкас.Туслăх сăмахĕ | 1 |
| **6** | Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем | 1 |
| | **Кĕркунне, халăх сăмахлăхĕ** | 5 |
| **7** | Кĕрхи сăнсем | 1 |
| **8** | Çулçă. Сивĕтет çанталăк. | 1 |
| **9** | Тупмалли юмахсем. Вăйă юррисем. | 1 |
| **10** | Юптарусем | 1 |
| **11** | Пакшапа Кашкăр. Тимĕр шапапа ăмăрт кайăк | 1 |
| | **Улăп йăхĕнчен эпир, туссем...** | 2 |
| **12** | Улăпсем. Ной карапĕ | 1 |
| **13** | Ту çинчен аннă Улăп. Çунатлă урхамах. | 1 |
| | **Юмах юпа тăрринче** | 5 |
| **14** | Чее такасем | 1 |
| **15** | Çăмартапа тăрăхла пăрça | 1 |
| **16** | Курай юмахĕ | 1 |
| **17** | Пакшапа мăйăр | 1 |
| **18** | Тинĕс кукринче | 1 |
| | **Асамçă хĕл** | 8 |
| **19** | Хĕл пуçламăшĕ | 1 |
| **20** | Хĕлле | 1 |
| **21** | Хĕллехи  çу кунĕсем | 1 |
| **22** | Асамçă. Хырпа чăрăш тата уртăш мĕншĕн яланах симĕс? | 1 |
| **23** | Йĕлтĕрпе | 1 |
| **24** | Халăх хайлавĕ майлă. | 1 |
| **25** | Мулкач йĕрĕпе. | 1 |
| **26** | Намăсланакан çĕнтерӳçĕ. | 1 |
| | **Эпир-сăпайлă ачасем** | 11 |
| **27** | Йăмăк Н.Карай. | 1 |
| **28** | Çывракан ача. М.  Джалиль. | 1 |
| **29** | Наян Кампур –юптару:А. Кăлкан. | 1 |
| **30** | Шăна кăмпин шăпи-юптару. | 1 |
| **31** | Чечек  çыххи. Кĕрен тӳпе. | 1 |
| **32** | Пуянлăх хакне ĕçлекен çын пĕлет. | 1 |
| **33** | Хăравçă. | 1 |
| **34** | «Хапхаçă». | 1 |
| **35** | Хаяр Улăп. | 1 |
| **36** | Шăвăç витре. | 1 |
| **37** | Асанне шкулĕ. | 1 |
| | **Çур хаваслăхĕ,  кĕрленĕ вăрçă çĕр çинче тахçан.** | 12 |
| **38** | Çурхи тĕнче. Çуркунне пуçланать. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| **39** | Ешĕл хунав. Çурхи вăйă. | 1 |
| **40** | Çурхи вăрманта. | 1 |
| **41** | Вăрманта. Малтанхи хĕвел. | 1 |
| **42** | Çуркунне çитсен. К.Иванов | 1 |
| **43** | Таврана илем кӳреççĕ. | 1 |
| **44** | Çурхи кун. Малтанхи кун. | 1 |
| **45** | Çумăр куççулĕ. | 1 |
| **46** | Вăрçă çăкăрĕ. | 1 |
| **47** | Эпилог. Хурçă хĕр. Берлинти палăк**.** | 1 |
| **48** | Çĕрулми сутма кайни**.** | 1 |
| **49** | Ан пултăр вăрçă нихăçан. | 1 |
| | **Чĕрчун тĕнчи** | 8 |
| **50** | Аптраман кăвакалсем | 1 |
| **51** | Кашкăрсемпе çапăçни. | 1 |
| **52** | Ăсанпа Хураçка. | 1 |
| **53** | Мулкач та тутă пултăр. | 1 |
| **54** | Н .Матвеев. Уртăш. | 1 |
| **55** | Çара çерçи. | 1 |
| **56** | Каюра. Н Матвеев. | 1 |
| **57** | Кашкăр тавăрăвĕ. | 1 |
| | **Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх** | 11 |
| **58** | Эл кӳлли. | 1 |
| **59** | Çил ачи. В.Харитонов | 1 |
| **60** | Çухату. Г Орлов | 1 |
| **61** | Çулçуревçĕ. Вăрăсем. | 1 |
| **62** | Тарăхнă така. | 1 |
| **63** | Лĕпĕш. Вулав хăвăртлăхне тĕрĕслени. | 1 |
| **64** | Г.Волков Тăван Атăл. | 1 |
| **65** | А. Артемьев «Тăван чĕлхе». | 1 |
| **66** | Чăваш çĕршывне килсе курсамăр. | 1 |
| **67** | Пĕтĕмлетӳ урокĕ. | 1 |
| **68** | Асран кайми тăван тавралăх. | 1 |

**4-мĕш класс - 34сех. (1сех. эрнере)**

| № | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | **1. Аван – и, шкул саккийĕ!.** | **2** |
| **1** | Сентябрь ирĕ. Кĕрхи кămăл. | **1** |
| **2** | Павãл, Микуль тата Петéр. И.Шухши. Малтанхи учителе. П.Михайлов | **1** |
| | **2. Килсе çитрĕ тулăх кĕр** | **3** |
| **3** | Кĕрхи илем. Сентябрь. | **1** |
| **4** | Кĕрхи вãрманта. Хур кайãк çулĕ. Тãрнасем. Г.Луч. | **1** |
| **5** | Кĕркунне макăрать. Тумне хывма ĕлкĕреймен. | **1** |
| | 3. **Ку вăл – ман Тăван çĕршыв**. | **3** |
| **6** | Тãван чĕлхе. И.Я.Яковлев чăваш халăхне панă халал. | **1** |
| **7** | Эпé чãваш ачи. Чăваш сăмахĕ. Эпé чãваш . | **1** |
| **8** | Нарспи пичетленĕ çул. Ун ятне этемлéх манмé. | **1** |
| | 4. **Пирĕн йăла – йĕркесем** | **3** |
| **9** | Йãла –йéрке. Хéллехи кунсенче. | **1** |
| | **5.Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен** | **2** |
| **10** | Юмахсем.( Куян тус. Мăйăр юмахĕ.) Халапсем. Мулкач. Улãпсем. | **1** |
| **11** | Вăйă юррисем. Халăх юррисем. | **1** |
| | **6. Шурă юр çусассăн** | **2** |
| **12** | Пéрремéш юр. Кайăксем ãçта çывãраççé. | **1** |
| **13** | Кайăксем ãçта çывãраççé. Кãрлач. | **1** |
| | **7. Кусем манан туссем** | **3** |
| **14** | Çил çуна. Математика мыскари. | **1** |
| **15** | Чаплã парне. Киш çинчен çÿрекен халап . | **1** |
| **16** | Пакãлти. | **1** |
| | **8. Ырапа усал** | **3** |
| **17** | Чĕлхесĕр Иван. Хăйма вăрри. | **1** |
| **18** | Эрхип мучипе Лĕнька.(1-2 пайсем,3-4 меш пайсем.) | **2** |
| **19** | Çывăх тус. | **1** |
| | 9. **Атте – анне пурри – телей тата пуянлăх** | **2** |
| **21** | Сãпка юрри. Анне – пирéн тéнче. | **1** |
| **22** | Çăкăр. Услан кайăк юмахé. | **1** |
| | **10.Çуркунне çитсессен** | **3** |
| **23** | Çуркунне. Шãнкãрч килни. | **1** |
| **24** | Курак. | **1** |
| **25** | Çéр ыйхãран вãранать. Сенкер май. | **1** |
| | **11. Вăрçă кĕрленĕ чух** | **2** |
| **26** | Амãш пилé. Éç çинче. | **1** |
| **27** | Урасăр. Эпир çĕнтертĕмер. | **1** |
| | **12.Ÿсен – тăран тĕнчинче** | **2** |
| **28** | Курăк академикĕ. | **1** |
| **29** | Çумăр хыççăн вăрманта. Елюк сăртенче. | **1** |
| | **13.Чĕр чунсем – пирĕн туссем** | **3** |
| **30** | Савар куççулĕ. Йытăпа кушак. | **1** |

| | | |
|---|---|---|
| **31** | Тӑрна ташши. Парпуспа Шулькка. | **1** |
| **32** | Лашана ҫӑлни. Хӗрӳ хӗвел хӗрӗлсе анчӗ. | **1** |
| | **14.Ҫу пуҫланчӗ** | **2** |
| **33** | Ҫу ҫитрé. Ҫуллахи вãрманта. | **1** |
| **34** | Август. Вулав пахалӑхне тӗрӗслесси. Пӗтӗмлетӳ урокӗ. | **1** |

## ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВ ĂСЛАЙĔСЕМПЕ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ ТĔРĔСЛЕСЕ ХАКЛАССИ

Вĕренекенсен вулав пахалăхне текстпа мĕнле ĕçленине шута илсе хаклаççĕ. Вулав ăслай- хăнăхвĕсене хакласси кашни класăн программипе килĕшсе тăмалла.

**1 класс**

Пĕрремĕш çул вĕренекенсен вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене куллен тĕрĕслесе пымалла, сăмах вĕççĕн хакламалла.

I класра сăмахри сыпăксемпе сасăсене уйăрас, вĕреннĕ сас паллисемлĕ смахсене, предложенисене, текстсене ăнланса, тĕрĕс, тикĕс, сыпăкăн-сыпăкăн вулас хăнăхусен аталанăвне асăрхасах тăмалла.

Вĕренӳ çулĕ вĕçнелле программăра кăтартнă ăслайсем (текста ăнланса, тĕрĕс те тикĕс, йывăр сăмахсене сыпăкласа, ансатраххисене тулли сăмахăн минутра 15–20 сăмах таран вулас пултарулăх) еплерех шайрине тĕрĕслемелле, сăмахпа каласа хакламалла.

**2класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача текста тĕрĕс вулать пулсан;

1-мĕш çурçулта текста тикĕс, сыпăкăн-сыпăкăн, хăш-пĕр сăмахсене сыпăкламасăр минутра 30 (ăшра 45) сăмахран кая мар вулать.

2-мĕш çурçулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене çеç сыпăкласа), минутра 50 (ăшра 60) сăмахран кая мар, сăмахсене, сасăсене тĕрĕс, пăсмасăр, сыпăксемпе саспаллисене вырăнĕпе ылмаштармасăр, сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс туса, предложенисен вĕçĕнчи чарăну паллисене пăхăнса тивĕçлĕ чарăнусемпе, интонаципе вулать; текстри палламан сăмахсене асăрхама пултарать; юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрма, вулани тата текстри ӳкерчĕксем çинчен йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсем тăрăх текстпа ĕçлеме пĕлет; сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавлама пултарать; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕплетет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача вуланă текста ăнланать пулсан;

1-мĕш çурçулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), минутра 25 смахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа) минутра 40 сăмахран кая мар вулать.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача мĕн вуланине вĕрентекен пулăшнипе çеç ăнланса илет пулсан;

1-мĕш çурçулта текста такăна-такăна, сăмахсене ваклаcа (хăш-пĕр сăмахсене çеç туллин) минутра 25 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта тикĕссĕн, сăмахсене ваклаcа (хăш-пĕр сăмахсене туллин) минутра 35 сăмахран кая мар вулать, анчах сăмахсемпе сыпăксене 3–4 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарать, сиктерсе хăварать, вырăнĕпе улăштарать, сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тĕрĕс тумасть; мĕн çинчен вуланине каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем твать, вĕсене врентекен пулăшнипе çеç тӳрлетет; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕпех пĕлмест.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача вĕрентекен ыйтăвĕсем пулăшнипе те текста ăнланаймасть;

1-мĕш çурçулта саспаллисемпе 20 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта такăна-такăна, сăмахсене сыпăкласа, минутра 30 сăмахран кая мар, сыпăксене, сасăсене 6 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарса, сиктерсе хăварса, ылмаштарса вулать, сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тума пĕлмест; текст ăшлăхне вĕрентекен пулăшнипе те каласа параймасть; сăвă тексчĕн пысăк пайне пăхмасăр калаймасть.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача уйрăм саспаллин каласа та вулама пĕлмест; пĕчĕк сăвва та пăхмасăр калама вĕренеймест.

**3 класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен мĕн вуланине туллин ăнлансан;
1-мĕш çурçулта тулли сăмахăн (пĕрремĕш хут тĕл пулнă сăмахсене сыпăкласа), пĕр тикĕссĕн, тивĕçлĕ интонаципе минутра 60 (ăшра 70) сăмахран кая мар вулать;
2-мĕш çурçулта ĕс ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, текст пĕлтерĕшĕпе шухăшне шута илсе тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмсемпе тăхтавсем туса) минутра 75 (ăшра 80) сăмахран кая мар вулать; вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн каласа пама, пысках мар текст пайĕсене харкам тĕллĕн уйăрса ят пама, ансăр план тăрăх каласа пама, ыйтусене хуравлама, шухăшне текстри тĕслĕхпе çирплетме, хайлавăн тĕп шухăшне ваттисен смахĕсемпе тата каларăшсемпе палăртма, текста асамласа каласа панă чухне сăнарлă сăмахсемпе усă курма пĕлет; автор герой çине мĕнле куçпа пăхнине, сăвă, калав, юптару, пьесăн ансат уйрăмлăхĕсене чухлать; пăхмасăр каласа памалли сăвă текстне çирĕплетет, ăна тĕрĕс те палăртуллă каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен вуланă текста ăнланать пулсан;
1-мĕш çурçулта текста палăртуллăн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса, йăнăшсене тÿрлетсе пырса, минутра 50 сăмахран кая мар вулать; 2-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ 65 сăмахран кая мар, вулавра 1–2 йăнăш, ача ăна хăех тÿрлетет; сăвва палăртуллăн, тивĕçлĕ интонаципе пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах та пысăках мар йăнăшсем (пăр сăмахах темиçе хут калани, пăтраштарни т.ыт.те) тăвать.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача текстăн тĕп шухăшне вĕрентекен пулăшнипе çеç ăнланать пулсан;
1-мĕш çурçулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене вакласа), сасса улăштармасăр минутра 50 сăмахран кая мар вулать;
2-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 60 сăмахран кая мар, ача сăмахсене, сыпăксемпе сасăсене 4–6 çĕрте пăтраштарса, сиктерсе хăварса, вĕсене вырăнĕпе ылмаштарса, сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс мар туса вулать; мĕн çинчен вуланине çыхăнуллăн каласа пама пĕлмест, текст пайĕсене уйăрса ят пама вĕрентекен пулăшнипе çеç пултарать, пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене пулăшмасăр тÿрлетеймест; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕпех пĕлмест;

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача 1-мĕш çурçулта сасса улăштармасăр, сăмахсене вакласа, минутра 35 сăмахран кая мар вулать;
2-мĕш çурçулта хăш-пĕр сăмахсене çеç вакламасăр минутра 45 сăмах таран вулать; 6 йăнăшран ытларах тăвать; мĕн вуланине пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, вĕрентекен ыйтăвĕсемпе те текстăн пайĕсене уйăрма пĕлмест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа пама пултараймасть;

«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла: ача сăмахсене сыпăкласа та вулаймасть; мĕн вуланине ăнланмасть, каласа параймасть; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлмест.

**4 класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача тулли сăмахсемпе, ăнланса, литература чĕлхин тĕп виçисене пăхăнса, вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса пырса вулать пулсан;
1-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 80 (ăшра 95) сăмахран кая мар; 2-мĕш çурçулта – минутра 95 (ăшра 110) сăмахран кая мар;
ача текста палăртуллă вулама харкам тĕллĕнех хатĕрленме пĕлет; текстăн тĕп шухăшне тивĕçлĕ интонаципе палăртса вулать; мĕн вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн, калавăн сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа пама пултарать, вуланин тĕп шухăшне хăй сăмахĕсемпе каласа парать; текстри сăнарсене, ĕçсене, çут çанталăка

сăнласа паракан сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене тупса пама пĕлет; геройсем пурнăçлакан ĕç-хĕле кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хак пама, калаври ĕçсен йĕркине палăртма, автор çинчен каласа пама пултарать; автор геройсем çине мĕнле куçпа пăхнине, литература терминĕсен (танлаштару, эпитет, метафора, гипербола, метоними, ирони) пĕлтерĕшĕсене чухлать; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕплетет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе, логика чарăнăвĕсемпе пусăмĕсем туса каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача ăнланса, тулли сăмахăн, пĕлтерĕшпе шухăша тивĕлĕ интонаципе тĕрĕс вулать пулсан;

1-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ 70 сăмахран кая мар;

2-мĕш çурçулта – 85 сăмахран кая мар; ача вуланă чухне 1–3 йăнăш тăвать, вуланин тĕп шухăшне хăй тĕллĕнех палăртать, анчах каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене вĕрентекен пулăшнипе тӳрлетет; текста туллин, кĕскен, суйлавлăн, калавăн сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа панă чухне пысăках мар йăнăшсем тăвать; литература теорийĕн ансат ăнлавĕсене (эпитет, метафора т.ыт.те) пĕтĕмĕшле ăнкарать; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах 1–2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех тӳрлетет.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача мĕн вуланине хăй тĕллĕнех ăнланаймасть пулсан;

1-мĕш çурçулта сасса улăштармасăр, тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене ваклаcа) минутра 65 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта сăмахсене вакламасăр минутра 80 сăмахран кая мар, 4–6 йăнăш туса вулать; вулани çинчен вĕрентĕкен пулăшнипе çеç кĕскен каласа парайрать; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентекен пулăшнипе çеç тӳрлетет:

«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла: вĕренекен ача 1-мĕш çурçулта сăмахсене ваклаcа (хăш- пĕрисене тулли сăмахăн), такăна-такăна, йăнăшсем туса, минутра 60 сăмах таран вулать; 2-мĕш çурçулта та тулли сăмахăн вулаймасть, 6 йăнăшран ытларах тăвать, минутра 70 сăмах таран вулать;

ача текста пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, пуплев йăнăшĕсем чылай тăвать, пулăшмасăр план тума, вуланин тĕп шухăшне уçса каласа пама пĕлеймест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа параймасть.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача сăмахсене сыпăкласа вулать, мĕн вуланине ăнланаймасть, сăвва пăхмасăр калама пачах пĕлмест пулсан.

Литература вулавне пахаланă чухне сасăпа, ăшра вуланине, ыйтусене еплерех хуравланине шута илмелле. Хакламалли вулав тексчĕн калăпăш\: 2 класра – вĕренӳ кĕнекинчи страницăн 1 /4 пайĕ, 3 класра – 1 /3 пайĕ, 4 класра – 1 /2 пайĕ. Вăл е ку паллăна мĕншĕн лартнине ăнлантармалла, ачасене тĕрĕс те ăнкарса вулама, текста тулашĕпе ăшлăхĕ тĕлĕшĕнчен тарăнрах сӳтсе явса пахалама хавхалантармалла.

Литература вулавне вĕрентӳ çулĕнче икĕ хутчен пĕтĕмĕшле тĕрĕслесе хаклаççĕ: 1-мĕш çурçул вĕçĕнче тата 2-мĕш çурçул (вĕренӳ çулĕ) вĕçленес умĕн.

## КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ ĂСЛАЙĔСЕМПЕ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ ТĔРĔСЛЕСЕ ХАКЛАССИ

Вĕренекенсен класс тулашĕнчи вулав пахалăхне тĕрĕслесе хакланă чухне тĕп вырăнта вулавăн ăслав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене шута илмелле. Çав шутра: ача-пăча кĕнекисене пĕлни, вĕсене хăй тĕллĕнех суйласа илме пултарни, кĕнекене вĕçне çитиччченех вуласа тухни, ăнланса вулани, вулани çинчен çыхăнуллăн каласа пани, кĕнекери ӳкерчĕксем текст ăшлăхĕн хăш самантне сăнланине ăнкарни.

Паллăна ача эрнере мĕн чухлĕ вуланине шута илсе лартаççĕ. Вулав норми çакăн пек: 2 класра – 1- мĕш çурçулта 1,5–3 страница, 2-мĕш çурçулта 5–10 страница, 3 класра – 1-мĕш çурçулта 10–12 страница, 2-мĕш çурçулта 20–25 страница, 4 класра – 1-мĕш çурçулта 20–25 страница, 2-мĕш çурçулта 30–35 страница.